чăваш халăх хаçачĕ

# ХЫПАР

1906 çулхи кăрлачăн 21-мĕшĕнче тухма тытăннă
1918 çулхи нарăс уйăхĕнчен тĕрлĕ ятпа тухнă
1991 çулхи çурлан 30-мĕшĕнче "ХЫПАР" ятпа тепĕр хут тухма пуçланă

СССР Аслă Канашĕн Президиумĕ 1968 çулхи пуш /март/ уйăхĕн 11-мĕшĕнче "Коммунизм ялавĕ" /халĕ "Хыпар"/ хаçата "ХИСЕП ПАЛЛИ" орденпа наградăланă



"ХЫПАР" никĕслевçи Н.В.Никольский (1878–1961)

232 /26387/№ Кĕçнерни кун, 2013, раштав (декабрь), 5 Хакĕ ирĕклĕ WWW.hypar.ru

## Саламлатпăр

Чăваш Республикин Пуçлăхĕн Михаил Игнатьевăн 2013 çулхи раштавăн 4-мĕшĕнче кăларнă 124-мĕш указĕпе килĕшӳллĕн Чăваш Республикин территорийĕнче синкерлĕ лару-тăру сиенĕсенчен асăрхаттарас тата вĕсене пĕтерес енĕпе тунă тава тивĕçлĕ ĕçсемшĕн Раççей Федерацийĕн Граждан оборони, чрезвычайлă лару-тăру тата инкек сиенĕсене пĕтерес енĕпе ĕçлекен министерствин Чăваш Республикинчи тĕп управлени пуçлăхне **Станислав Юрьевич АНТОНОВА «Чăваш Республики умĕнчи тава тивĕçлĕ ĕçсемшĕн»** орден медалĕпе наградăланă.

## Михаил Игнатьев Канаш ларăвне хутшăннă

***Раштав уйăхĕн 3-мĕшĕнче Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев Мускавра Раççей Ют çĕр-шыв ĕçĕсен министерстви çумĕнчи РФ субъекчĕсен пуçлăхĕсен Канашĕн XXII ларăвне хутшăннă. 2013-2014 çулсенчи тапхăрта вăл унăн членĕ шутланать.***

Ларура Раççейпе Евроканаш хушшинчи çыхăнусене, вĕсен малашнехи аталанăвĕн ыйтăвĕсене пăхса тухнă. Раççей ют çĕр-шыв ĕçĕсен министрĕ Сергей Лавров Раççей регионĕсем тата Ют çĕр-шыв ĕçĕсен министерстви информаци уçлăхĕнче пĕрле ĕçлесси лайăхланнине палăртнă, федераци субъекчĕсене инновацие мала кăларса чикĕ леш енчи çыхăнусене çине тăрсах аталантарма сĕннĕ.

РФ регионсен аталанăвĕн министрĕ Игорь Слюняев доклад тунă. Вăл пĕлтернĕ тăрăх – Балти тинĕсĕ хĕрринчи тата Çурçĕрти çĕр-шывсем çыхăну тытмалли программăсемпе килĕшӳллĕн Раççейре пысăк пĕлтерĕшлĕ 25 инвестици проектне пурнăçлаççĕ. Çак тĕллевпе Раççей Федерацийĕн тата Евроканаш çĕр-шывĕсен бюджечĕсенчен 429 млн евро уйăраççĕ. Апла пулин те инвестици ĕçĕ-хĕлне çĕнетсе улăштармалла. Акă 2012 çулта Раççее ют çĕр-шывсенчен тӳрремĕнех 18,7 млрд инвестици явăçтарнă – çакă тĕнчери пĕтĕмĕшле шайăн 2,1% çеç.

Ытти докладчик хăйĕн сăмахĕнче чикĕ леш енчи инвесторсемпе хутшăнусем йĕркеленĕ чухне регионсенчи суту-илӳпе промышленноç палатисен майĕсемпе анлăрах усă курмаллине, хамăр çĕр-шыври аслă шкулсенче ют çĕр-шывсенчи туристсен йышне ӳстермеллине, пĕрлехи проектсене пурнăçланă чухне экологи нормисене пăхăнмаллине палăртнă.

Раççей Ют çĕр-шыв ĕçĕсен министерствинче çавăн пекех Михаил Игнатьев Федерацин Никама Пăхăнман Патшалăхсен Пĕрлĕхĕн, чикĕ леш енче пурăнакан ентешĕмĕрсен ыйтăвĕсемпе тата Пĕтĕм тĕнчери гуманитари çыхăнăвĕ енĕпе ĕçлекен агентство ертӳçипе Константин Косачевпа тĕл пулнă. Тĕрлĕ енĕпе, уйрăммăн илсен, республикăра çуралса ӳснĕ, халĕ чикĕ леш енче пурăнакан çынсене Чăваш Енре инвестици ĕçхĕлне явăçтарас тĕлĕшпе çыхăну тытассине сӳтсе явнă.

**А.ВАСИЛЬЕВА.**

## Шупашкар – реле хӳтлĕхĕн производствин центрĕ

***Раштавăн 3-мĕшĕнче Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев республикăн Пĕтĕм тĕнчери ятарлă 16-мĕш «Раççей электричество сечĕсем-2013» курава хутшăнакан предприятийĕсен павильонне çитсе курнă. Çак курав Мускавра «Пĕтĕм тĕнчери МосЭкспо курав центрĕ» ВВЦ территорийĕнче иртет.***

Кунта «ЭКРА» НПП», «ИЗВА», «Бреслер» ИЦ», «Бреслер» НПП», «Электроаппарат», «Электрощит» ОООсем, «ВНИИР», «Электроавтомат» АУОсем, «Шупашкарти электромеханика завочĕ», «ЧЭАЗ» АХОсем, «Каскад» НПО тата ыттисем хăйсен экспозицийĕсене тăратнă. Курав ĕçлеме пуçланă кунранах Чăваш Енри предприятисем чылай коммерци сĕнĕвĕ пухма ĕлкĕрнĕ. Калăпăр, «ЭКРА» компанин цифра подстанцийĕсемпе – рынока кăларнă çĕнĕ йышши оборудованипе – интересленекенсем пур.

Журналистсен ыйтăвĕсене хуравланă май республика Пуçлăхĕ Чăваш Енĕн электротехника кластерĕн предприятийĕсен продукцийĕ чикĕ леш енчи аналогсемпе ăнăçлă тупăшни çинчен каланă, вăл пахалăх енĕпе ют çĕр-шывсен продукцийĕнчен кая мар, тепĕр чух ирттерет те, çав вăхăтрах хакĕпе чылай йӳнĕрех. «Пирĕн предприятисен продукцине тĕнче шайĕнче пĕлеççĕ, иккĕленместĕп: конкуренци вăй илсе пынине пăхмасăр вĕсем малашне те малти позицисенче пулĕç. Республика Правительстви хăй енчен пулăшса пырĕ, вĕсемшĕн ăнăçлă аталанмалли условисем йĕркелĕ. Паян Шупашкар – чăннипех реле хӳтлĕхĕн производствин центрĕ», – тенĕ Михаил Игнатьев.

**Д.ПЕТРОВ.**

*Çар*

## Чăваш Ен – çĕнтерӳçĕсен йышĕнче

***Чӳк уйăхĕн юлашки кунĕнче Чăваш Республикин Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев Тĕп çар округĕн йĕркелӳпе мобилизаци управленийĕн штабĕн ертӳçипе Александр Линьков генерал-майорпа тĕл пулнă. Ун хыççăн РФ Хĕç-пăшаллă Вăйĕсен Çар управленийĕн органĕсен çар учетне çӳллĕ шайра йĕркелес тĕллевпе ирттернĕ смотр-конкурсра мала тухнăшăн Чăваш Республикине Раççей Федерацийĕн Оборона министерствин вымпелне панă çĕре хутшăннă.***

Асăннă тупăшăва ирттерме Раççей Правительствин Постановленийĕпе 2006 çулта йышăннă. РФ Оборона министерствин конкурс комиссийĕ 2013 çулхи ака уйăхĕнче Чăваш Республикинчи çар комиссариачĕсемпе вырăнти хăй тытăмлăх органĕсем саппасри çар çыннисене мĕнле шута илнине, вĕсемпе мĕнле ĕçленине тĕрĕсленĕ. Конкурс комиссийĕн пĕтĕмлетĕвĕпе федераци субъекчĕсен хушшинче Чăваш Ен пĕрремĕш вырăн йышăннă. «Çак çитĕнӳ республика правительствин, муниципалитет йĕркеленĕвĕсен, администраци пуçлăхĕсен, çар комиссариачĕн пайĕсен кулленхи тăрăшуллă пĕрлехи ĕçĕпе пулнă», – тенĕ А.Линьков генерал-майор. Вăл Чăваш Ен ертӳлĕхĕ çитĕнекен ăрăва патриот воспитанийĕ парас тĕлĕшпе пысăк ĕç тунине, «Орленок», «Зарница» çар вăййисем тăтăш ирттернине палăртнă.

Раççей Федерацийĕн Хĕç-пăшаллă Вăйĕсен тĕллевĕсене пурнăçлама пысăк тӳпе хывнăшăн Чăваш Республикин Пуçлăхĕпе Михаил Игнатьевпа Канаш район администрацийĕн пуçлăхне Владислав Софронова РФ Оборона министерстви ячĕпе алла çыхмалли сехетпе чысланă. Смотр-конкурса пирĕн республикăри пур ял-хула тăрăхĕсемпе округĕсем хастар хутшăннă.

Иккĕмĕшпе виççĕмĕш вырăнсенче – Ставрополь крайĕпе Тамбов облаçĕ.

**Ю.ПЕТРОВ.**

*Лару*

## Заводра токарь çук. Мĕншĕн?




***Республика Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев ĕнер экономикăна модернизацилес тата ăна çĕнĕ технологисемпе пуянлатас тĕлĕшпе ĕçлекен канаш ларăвне ирттерчĕ. Унта хутшăннисене бизнесăн экологи хутшăнăвĕсенчи яваплăхĕ енĕпе Чăваш Ен пĕлтĕр федерацин 83 регионĕ хушшинче пĕрремĕшсен вырăнне тухнине пĕлтерчĕ.***

Вĕсен ĕçне экологи-энергетика енĕпе хаклакан Интерфакс-ЭРА рейтинг агентстви субъектсен экоэнерги, технологи тухăçлăхĕпе аталанăвĕн, предприятисен экологи уççăнлăхĕн шайне тишкернĕ. Республикăри кашни предприятин производство калăпăшне, вĕсенче миçе çын ĕçленине, электроэнергипе еплерех усă курнине, ытти ыйтăва тĕпченĕ.

Экономика аталанăвĕн, промышленноç тата суту-илӳ министрĕн тивĕçне вăхăтлăха пурнăçлакан Владимир Аврелькин республика производство валли кадрсем вĕрентсе хатĕрлес тĕлĕшпе вĕренӳ заведенийĕсем, патшалăхăн тивĕçлĕ органĕсем мĕнлерех вăй хуни çинчен каласа пачĕ. ЧР Министрсен Кабинечĕ умĕнчи тĕп тĕллевсенчен пĕри – экономикăна инновацилесси. Иртнĕ ĕмĕрте производствăра чĕр тавар тĕп вырăн йышăннă пулсан халĕ вăл çукран е çителĕксĕртен йывăрлăха кĕрсе ӳкекен предприяти Чăваш Енре çукпа пĕрех. Тавар туса кăларакансемшĕн цехсенче ăста кадрсем пулни, вăл е ку ĕçре çĕннине, халĕччен усă курман технологисене пĕлни пысăк пĕлтерĕшлĕ.

«Çывăх вăхăтрах ĕç дефицит пулса тăрĕ, – терĕ В.Аврелькин. – Кашни предприяти рабочи специальноçĕпе ĕçе илме çын шырать. Аслă тата ятарлă вăтам пĕлӳ паракан шкулсем предприятисене кирлĕ чухлĕ кадрсем вĕрентсе кăлараймаççĕ тата вĕсен професси пĕлĕвĕ чылай чухне паянхи пурнăç ыйтнине тивĕçтермест».

Мĕн пур харпăрлăхлă предприятисене ĕç меслетне алла илнĕ рабочисем çитменни ура хурать. Хăш-пĕр çĕрте çĕнĕ проектсене пурнăçлаймаççĕ. Рабочисем – республика экономикине аталантарма хутшăнакан кадрсен 37 %. Ытларах станок, руль, тимĕр шăратакан кăмака умĕнче, цехра е фабрика-заводра вăй хуракансем кирлĕ. Шел те, республикăри вĕренӳ заведенийĕсем предприятисем ыйтнине çав-çавах пĕрремĕш вырăна хурса йышăнмаççĕ. Çамрăксен 63 % аслă тата ятарлă вăтам пĕлӳ илет. Рабочи пулма вара институт е техникум пĕтермелле мар, колледж е профтехучилище дипломне илмелле.

Рабочисем çитменнине иртнĕ ĕмĕрĕн 90-мĕш çулсенчи демографи лару-тăрăвĕпе те ăнлантармалла. Ун чухне ача чылай сахалрах çуратнăран та завод-фабрикăра вăй хуракан сахал. Яш-кĕрĕмпе хĕр-упраç юрист, экономист, менеджер чи хисеплĕ те укçа ытларах кӳрекен професси тесе шухăшлама пăрахман-ха. Предприятисем вĕсене питех ыйтмаççĕ.

Докладçă республикăра кадр енĕпе йывăрлăхран мĕнле тухмаллине те уçăмлатрĕ. Професси пĕлĕвĕ паракан шкулсен тата предприятисен икĕ енлĕ çыхăнăвне çирĕплетмелле. Ăна яр уççăн кăтартакан тĕслĕх чылай. Сăмахран, Шупашкарти электромеханика колледжĕ кадрсем вĕрентсе хатĕрлес енĕпе И.Н.Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университечĕпе, «ЭЛАРА» обществăпа килĕшӳ çирĕплетнĕ. Ку ĕçе «Шупашкарти электроаппаратура завочĕ», «ЭГРО», «Чăвашкабель», «Трактор завочĕсем» концерн» обществăсем те хастар хутшăнаççĕ. «ЭЛАРА» кăçал вĕренӳ центрĕ валли 3,5 млн тенкĕлĕх оборудовани туяннă. Университет çитес çулсенче федераци программипе килĕшӳллĕн кадрсем вĕрентсе хатĕрлеме тытăнĕ. Ăна пурнăçлама 79 млн тенкĕ куçарĕç.

Вĕренӳ тата çамрăксен политикин министрĕ Владимир Иванов экономикăна рабочисемпе, вăтам сыпăкри кадрсемпе тивĕçтерес ыйтăва 2013-2016 çулсенче предприятисене кирлĕ тĕрлĕ професси паракан нумай тĕллевлĕ 13 центр ĕçне йĕркелесе татса парасса шанать. Производствăна тивĕçтерекен специальноçсене кăна вĕрентме шухăшлаççĕ. Вĕренӳ çулне çитес çулхи авăн уйăхĕнчен пуçласшăн.

Доклада сӳтсе явма РФ Федераци Канашĕн членĕ Галина Николаева та хутшăнчĕ. Раççейре рабочисем, инженерсем вĕрентсе хатĕрлес ыйту çивĕч тăнине тĕслĕхсемпе çирĕплетрĕ. Ăна еплерех татса памалли çул-йĕре кăтартрĕ. Уйрăммăн илсен предприятисемпе вĕренӳ заведенийĕсен хушшинчи çыхăнăва çирĕплетмеллине палăртрĕ.

ЧР Суту-илӳпе промышленноç палатин президенчĕ Игорь Кустарин каланă тăрăх – пысăк пĕлтерĕшлĕ ĕçе республикăри министерствăсем çителĕксĕр хутшăнаççĕ. Ăна Вĕренӳ министерстви çине тӳпелеме хăтланаççĕ. «Кашни министерствăн хăйĕн отрасльне çитес 5 çулта кадрсемпе тивĕçтерме программа çирĕплетмелле, Вĕренӳ министерствине ярса памалла. Вăл пĕрлехи план тăвĕ».

Шупашкарти предприятисен ертӳçисене те итлерĕç. Ларăва республика Пуçлăхĕ пĕтĕмлетрĕ, вĕренӳ ĕçĕшĕн яваплă министрсенчен рабочисем вĕрентсе кăларас енĕпе çывăх вăхăтра мĕн-мĕн тумаллине уçăмлă палăртма, маларахри тĕллевсене пурнăçлама ыйтрĕ.

■ **Юрий МИХАЙЛОВ**

## Патшалăх программине ырланă

***Чăваш Республикин 2014-2020 çулсем валли хатĕрленĕ "Чăваш Ен информаци обществи" патшалăх программине ЧР Министрсен Кабинечĕ чӳк уйăхĕн 27-мĕшĕнче ырланă. Унăн тытăмне 4 çум программа кĕрет.***

Патшалăх программин тĕп тĕллевĕ – Чăваш Республикин экономика, социополитика, культура, общество пурнăçĕн ытти сферинче информаци тата телекоммуникаци технологийĕсене аталантарасси. Ăна пурнăça кĕртни Интернетпа усă куракан кил хуçалăхĕсен шутне пысăклатма, патшалăх пулăшу ĕçĕсене электрон мелпе кӳрессин пахалăхне тата влаç органĕсен уççăнлăхне ӳстерме май парĕ.

Республика Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев влаç органĕсен тĕп тĕллевĕ патшалăх пулăшу ĕçĕсене пахалăхлăн кӳресси пулнине палăртнă. Унăн шухăшĕпе – влаçăн уçă пулмалла. Уççăнлăх регионăн ĕç климатне тата инвестици илĕртӳлĕхне лайăхлатнине пĕлтернĕ Михаил Игнатьев. Ку енĕпе малалла ĕçлеме чĕнсе каланă. ЧР информаци политикипе массăллă коммуникацисен министрĕ Валентина Андреева Правительство членĕсене патшалăх программипе паллаштарнă май уйрăм самантсем çинче чарăнса тăнă. Программăпа килĕшӳллĕн 2021 çул тĕлне Чăваш Ен информаци технологийĕсен аталанăвĕ енĕпе лидер шутланакан субъектсен теçеткинче упранса юлма тивĕç. Интернетпа усă курасси 100 кил хуçалăхĕ пуçне хулара – 90, ялта 60-а çитмелле. Росстат кăтартăвĕсем тăрăх – 2012 çул пĕтĕмлетĕвĕсемпе Чăваш Ен федерацин Атăлçи округĕнчи регионсен рейтингĕнче кил хуçалăхĕсенче Интернет пуррипе иккĕмĕш вырăн йышăннă. Халĕ пирĕн республикăра Интернетпа усă куракансен йышĕ 65,4% танлашать /Раççейре – 52%/, хуласенче – 76%.

Программăра патшалăх /муниципалитет/ пулăшу ĕçĕсене пахалăхлăн кӳмеллине те палăртнă. Чăваш Енре Патшалăх пулăшу ĕçĕсен пĕрлехи порталĕнче пулăшу ĕçĕсен 69 тĕсĕпе усă курма пулать. Чӳк уйăхĕн 18-мĕшĕ тĕлне порталта 38,5 пин çын регистрациленнĕ. Ку вăл республикăра пурăнакансен 3,1%. Чăваш Ен асăннă кăтартупа ФАО регионĕсен рейтингĕнче Самар /6,8%/ тата Чĕмпĕр /5,8%/ облаçĕсем хыççăн виççĕмĕш вырăнта. 2019 çул тĕлне çак мелпе усă куракансен йышĕ 70% çитмелле.

Чăваш Енре документсен электрон çаврăнăшне 216 влаç органĕ тата бюджет учрежденийĕ хутшăнаççĕ. 2013 çул пуçланнăранпа çак тытăм урлă 5,3 документ илнĕ /ку вăл пĕлтĕрхинчен 15% нумайрах/ тата 4,3 пин ярса панă /ӳсĕм – 23%/. Чăваш Республикин влаç органĕсен официаллă порталĕнче çулталăк вĕçлениччен "Уçă кăтартусем" уйрăм /www.opendata.cap.ru/ туса хураççĕ, унта ĕç тăвакан влаç тата вырăнти хăй тытăмлăх органĕсен ĕçĕ-хĕлĕ пирки уçă информаци вырнаçтарĕç.

Геоинформаци тивĕçтерĕвĕн аталанăвĕпе çыхăннă çум программа влаç органĕсен информресурсĕсенчен хутлăх кăтартăвĕсен пĕрлехи инфратытăмне туса хума май парать. Республикăн геоинформаци порталĕ /вăл кăçал çулла ĕçлеме пуçланă/ çак инфратытăма йĕркелемелли тата аталантармалли никĕс пулса тăрать. Хальхи вăхăтра геопорталта Чăваш Республикин интерактив карттипе /унта патшалăх учрежденийĕсем, культура еткерĕн объекчĕсем, массăллă информаци хатĕрĕсем, ирĕклĕ çĕр лаптăкĕсем пирки калакан кăтартусем пур/ тата республикăн инвестици площадкисем пирки пĕлтерекен информаципе паллашма пулать.

"Информаци хутлăхĕ" çум программăна тĕпе хурса регионти МИХсен, кĕнеке кăларассин тата цифра телекуравĕн аталанăвĕпе çыхăннă мероприятисене пурнăça кĕртĕç. Чăваш Енре хальхи вăхăтра 174 массăллă информаци хатĕрне регистрациленĕ. Кĕнеке кăларасси пирки калас тăк – ачасемпе çамрăксем тата РФ регионĕсенче пурăнакан чăвашсем валли социаллă пĕлтерĕшлĕ кăларăмсене кун çути кăтартмашкăн патшалăх та пулăшĕ.

■ **И.БЕЛОВА**

## Пулас лауреатсем, сас парăр!

***ЧР Журналистсен союзĕ 2013 çулшăн республикăри журналистсен Çемен Элкер, Николай Никольский тата Леонид Ильин ячĕллĕ çуллен паракан премийĕсене илме тăратакан ĕçсене йышăнма пуçлани çинчен пĕлтерет.***

ЧР Журналистсен союзĕн членĕсем – массăллă информаци хатĕрĕсенче, информаци агентствисенче, пресс-службăсенче, ытти медиа-тытăмра ĕçлекенсем – хăйсен ĕçĕсене тăратма пултараççĕ. Комисси 2013 çулта пичетленнĕ, теле- тата радиоканалсен эфирне тухнă, информагентствăсен лентисене вырнаçтарнă, уйрăм кĕнекен кăларнă ĕçсене тишкерме йышăнать.

Конкурс ĕçĕсене тата документсене массăллă информаци хатĕрĕсен редакцийĕсем тата организацисен коллективĕсем тăратма пултараççĕ. Ĕçсене кăçалхи раштавăн 20-мĕшĕччен çак адреспа йышăнаççĕ: Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчĕ, 13, Пичет çурчĕ, 7 хут, ЧР Журналистсен союзĕ.

Лауреатсем çитес çулхи кăрлачра паллă пулĕç.

■ **Н.КОВАЛЕВ**

**КУН хыççăн КУН**

☎ 56-04-26

## ОШ ĕçе пĕтĕмлетнĕ

***Ытлари кун Шупашкарта Федерацин хăрушсăрлăх службин республикăри управленийĕн пуçлăхĕ Сергей Софронов ертсе пынипе ЧР Оперативлă штабĕн ларăвĕ иртнĕ, унта вĕçленсе пыракан çулталăкри ĕçе пĕтĕмлетнĕ.***

Кăçал штаб теракстсем тума хатĕрленнин паллисене вăхăтра тупса палăртассине, обществăпа политика тата спорт мероприятийĕсен, çав шутра Хусанта иртнĕ Пĕтĕм тĕнчери универсиада хăрушсăрлăхне тивĕçтерессине тĕпе хунă. Штабăн тăвата ларăвне йĕркеленĕ, вĕсенче терроризм хăрушлăхне сирмелли, унпа кĕрешмелли тытăма аталантармалли мерăсене палăртнă, анлă икĕ вĕренӳ ирттернĕ.

**Н.ДМИТРИЕВ.**

## «Ачасене – Конституци çинчен»

***Çакнашкал ятпа ЧР ачасемпе çамрăксен библиотекинче кĕнекесен куравĕ уçăлнă. Ăна РФ Конституцине йышăннăранпа 20 çул çитнине халалланă.***

Çĕр-шывăн тĕп саккунĕпе вун-вун кĕнеке паллаштарать. Тĕслĕхрен, Алексей Любимов «Раççей Федерацийĕн Конституцийĕ» кăларăма альбом евĕр хатĕрленĕ, унта патшалăх влаçĕпе федераци тытăмĕ çинчен, граждансен прависемпе тивĕçĕсене таблицăсемпе схемăсем урлă уçса панă. Михаил Смоленский те хăйĕн кĕнекинче Конституци пĕлтерĕшне çăмăл чĕлхепе ăнлантарса çырнă.

Куравра çавăн пекех РФ Президенчĕ çумĕнчи ачасен прависемпе ĕçлекен уполномоченнăйăн Павел Астаховăн кĕнекисем те вырăн тупнă. «Эпĕ тата патшалăх», «Эпĕ тата çул», «Эпĕ канатăп» тата ытти кăларăм тĕрлĕ ыйту çине хурав тупма пулăшать.

**О.МАСЛОВ.**

## Фильмра та, кĕнекере те

***Хусанта пурăнакан Денис Осокин филологăн «Небесные жены луговых мари» кĕнеки Андрей Белый премине тивĕçнĕ. Автор ĕçне «Проза» номинацире чи лайăххи тесе палăртнă.***

Андрей Белый ячĕллĕ литература премине 1978 çулта Санкт-Петербургри «Часы» литература журналĕн редакцийĕ çирĕплетнĕ. Чăвашсенчен ăна Геннадий Айхи поэт (1987), Алексей Прокопьев куçаруçă (2010) тивĕçнĕ.

Д.Осокинăн асăннă ĕçĕ çармăс фольклорĕ çинче никĕсленнĕ прозăлла тата сăвăлласа çырнă хайлавсенчен тăрать. Кĕнеке кăлариччен ку ĕç тăрăх «Солнцеворот» фильм ярăмне ӳкернĕ. Вăл, мари чĕлхипе ӳкернĕскер, нумай кинофестивальте парнене тивĕçнĕ. Унта Атăл тăрăхĕнчи халăхсен культурине, йăли-йĕркине сăнланă. Кăçалхи çу уйăхĕнче Д.Осокин Атăл тăрăхĕнче пурăнакан халăхсен авалхи тĕнпе çыхăннă вырăнĕсене çитсе курнă.

**А.ГРОМОВА.**

## Тавăç виçи – 4 млрд тенке яхăн

***«Атăлçи пир-авăр компанийĕн» конкурс управляющийĕ судран харăсах пилĕк çынна – Дмитрий Романцова, Никита Колесникова, Владислав Дудина, Евгений Осокина тата Дмитрий Порта – парăмсем тĕлĕшпе пĕрлехи майпа явап тыттарма ыйтнă. Вĕсем пурте предприяти топменеджерĕ пулнăскерсем. Тавăç хакĕ – 4 млрд тенке яхăн. Çакăн çинчен «Чăваш Ен» телерадиокомпани пĕлтернĕ.***

Республикăн Арбитраж сучĕ тавăça раштавăн 11-мĕшĕнче тишкерĕ. Аса илтерни вырăнлă: Осокинпа Дудин тĕрлĕ вăхăтра компани гендиректорĕсем пулнă, Порт, Колесников тата Романцов – Мускаври «Савва» компанисен ушкăнне кĕнĕ ВТКн директорсен канашĕн членĕсем. Унăн тытăмĕнче пиравăр фабрики, Çĕнĕ Шупашкарти çурт-йĕр строительствин комбиначĕ, темиçе строительство компанийĕ, пичет кăларăмĕсем тата «Канал 5 плюс» телекомпани пулнă. Холдинг «Финн айлăмĕ» пурăнмалли микрорайонăн тата «Сувар-отель» хăна çурчĕн ăнăççăр строительствипе асра юлнă – çак объектсем халĕ те вĕçленмен. Тележурналистсем хатĕрленĕ сюжетра «Савва» ушкăна кĕнĕ предприятисем пурте панкрута тухни пирки каланă.

**К.АНТИПОВ.**

**Çанталăк çинчен**

Паян ăмăр çанталăк, юр çăвать. Çил кăнтăр-хĕвел анăçĕнчен çеккунтра 6 метр хăвăртлăхпа вĕрет. Сывлăш температури **кăнтăрла 2, каçхине 1 градус сивĕ.** Атмосфера пусăмĕ 736 мм, сывлăшри нӳрĕк 92 процент.

**Кун тăршшĕ 7 сехет те 13 минут.**

Ыран пĕлĕтлĕ çанталăк пулать. Çил хĕвел анăçĕнчен çеккунтра 6 метр хăвăртлăхпа вĕрет. Сывлăш температури **кăнтăрла 8, каçхине 3 градус сивĕ.** Атмосфера пусăмĕ 743 мм, сывлăшри нӳрĕк 87 процент.

**Кун тăршшĕ 7 сехет те 11 минут.**

*Чăваш Республикин САККУНĔ*

# ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ПУРНЕ ТЕ ТИВĔÇЛĔ МЕДИЦИНА СТРАХОВАНИЙĔН ТЕРРИТОРИ ФОНЧĔН 2014 ÇУЛХИ ТАТА ПЛАНПА ПĂХНĂ 2015 ТАТА 2016 ÇУЛСЕНЧИ ТАПХĂРТИ БЮДЖЕЧĔ ÇИНЧЕН

*Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕ 2013 çулхи чӳк уйăхĕн 26-мĕшĕнче йышăннă*

1 статья. **Чăваш Республикин Пурне те тивĕçлĕ медицина страхованийĕн территори фончĕн 2014 çулхи тата планпа пăхнă 2015 тата 2016 çулсенчи тапхăрти бюджечĕн тĕп паллисем**

1. Чăваш Республикин Пурне те тивĕçлĕ медицина страхованийĕн территори фончĕн (малалла – Фонд) 2014 çулхи бюджечĕн тĕп паллисене çирĕплетес:

1) Фонд бюджечĕн палăртакан тупăшĕсен пĕтĕмĕшле калăпăшне 10124654,3 пин тенкĕ чухлĕ, çав шутра Пурне те тивĕçлĕ медицина страхованийĕн федераци фончĕн бюджетĕнчен илекен бюджетсем хушшинчи трансфертсен шучĕпе 8640379,0 пин тенкĕ чухлĕ, Чăваш Республикин республика бюджетĕнчен илекен бюджетсем хушшинчи трансфертсен шучĕпе 1314275,3 пин тенкĕ чухлĕ;

2) Фонд бюджечĕн тăкакĕсен пĕтĕмĕшле калăпăшне 10124654,3 пин тенкĕ чухлĕ.

2. Фондăн 2015 тата 2016 çулсенчи тапхăрти бюджечĕн тĕп паллисене çирĕплетес:

1) Фондăн 2015 çул валли палăртакан бюджечĕн тупăшĕсен пĕтĕмĕшле калăпăшне 10695439,7 пин тенкĕ чухлĕ, çав шутра Пурне те тивĕçлĕ медицина страхованийĕн федераци фончĕн бюджетĕнчен илекен бюджетсем хушшинчи трансфертсен шучĕпе 10525439,7 пин тенкĕ чухлĕ тата 2016 çул валли 11348075,3 пин тенкĕ чухлĕ, çав шутра Пурне те тивĕçлĕ медицина страхованийĕн федераци фончĕн бюджетĕнчен илекен бюджетсем хушшинчи трансфертсен шучĕпе 11178075,3 пин тенкĕ чухлĕ;

2) Фонд бюджечĕн 2015 çулхи тăкакĕсен пĕтĕмĕшле калăпăшне 10695439,7 пин тенкĕ чухлĕ тата 2016 çулхи тăкакĕсен пĕтĕмĕшле калăпăшне 11348075,3 пин тенкĕ чухлĕ.

2 статья. **Фонд бюджечĕн тупăшĕсен тĕп администраторĕсем тата Фонд бюджечĕн дефицитне укçа-тенкĕпе тивĕçтермелли çăл куçсен тĕп администраторĕсем**

1. Фонд бюджечĕн тупăшĕсен тĕп администраторĕсен перечененьне çак Саккун çумне 1-мĕш хушса çырнипе килĕшӳллĕн çирĕплетес.

2. Фонд бюджечĕн дефицитне укçа-тенкĕпе тивĕçтермелли çăл куçсен тĕп администраторĕсен перечененьне çак Саккун çумне 2-мĕш хушса çырнипе килĕшӳллĕн çирĕплетес.

3 статья. **Фонд бюджечĕн 2014 çулхи тата планпа пăхнă 2015 тата 2016 çулсенчи тапхăрти бюджет укçи-тенки**

1. Фонд бюджечĕн бюджет укçи-тенкине 2014 çул валли бюджетсен тăкаксен классификацийĕн пайĕсем, çум пайĕсем, тĕллевлĕ статйисем тата тăкаксен тĕсĕсен ушкăнĕсем тăрăх пайласа панине çак Саккун çумне 3-мĕш хушса çырнипе килĕшӳллĕн çирĕплетес.

2. Фонд бюджечĕн бюджет укçи-тенкине планпа пăхнă 2015 тата 2016 çулсенчи тапхăр валли бюджетсен тăкаксен классификацийĕн пайĕ¬сем, çум пайĕсем, тĕллевлĕ статйисем тата тăкаксен тĕсĕсен ушкăнĕсем тăрăх пайласа панине çак Саккун çумне 4-мĕш хушса çырнипе килĕшӳллĕн çирĕплетес.

4 статья. **Фонд бюджетне уйăрса паракан бюджетсем хушшинчи трансфертсем**

1. Çирĕплетес:

1) Пурне те тивĕçлĕ медицина страхованийĕн федераци фончĕн бюджетĕнчен, Чăваш Республикин республика бюджетĕнчен илекен бюджетсем хушшинчи трансфертсене 2014 çул валли пайласа панине çак Саккун çумне 5-мĕш хушса çырнипе килĕшӳллĕн;

2) Пурне те тивĕçлĕ медицина страхованийĕн федераци фондĕнчен илекен бюджетсем хушшинчи трансфертсене 2015 тата 2016 çулсем валли пайласа панине çак Саккун çумне 6-мĕш хушса çырнипе килĕшӳллĕн.

2. Çапла палăртас: Пурне те тивĕçлĕ медицина страхованийĕн федераци фончĕн бюджетĕнчен, Чăваш Республикин республика бюджетĕнчен илекен бюджетсем хушшинчи трансфертсене Чăваш Республикин территорийĕнче пурне те тивĕçлĕ медицина страхованийĕ тăвас ĕçе йĕркелессине укçа-тенкĕпе тивĕçтерме ярасçĕ.

3. Çапла палăртас: 2014 çулта пурне те тивĕçлĕ медицина страхованийĕн никĕсри программи шайĕнче пурне те тивĕçлĕ медицина страхованийĕн территори программине пурне те тивĕçлĕ медицина страхованийĕн никĕсри программи пайĕнче пурнăçлассине укçа-тенкĕпе тивĕçтерме Фонд бюджетне çак Саккун çумне 5-мĕш хушса çырнипе çав тĕллевсем валли палăртса хăварнă бюджет укçи-тенкин çулталăкри калăпăшĕн пĕрре вун иккĕмĕш пайĕпе танлашакан виçепе бюджетсем хушшинчи трансфертсене Чăваш Республикин республика бюджетĕнчен кашни уйăхăн 20-мĕш кунĕччен куçарса парасçĕ.

5 статья. **Фонд бюджетне 2014 çулта пурнăçлассин уйрăмлăхĕсем**

1. Çапла палăртас: тĕллевлĕн уйăракан субсидисене, субвенцисене, бюджетсем хушшинчи ытти трансфертсене, çав шутра Фонд бюджетне пурнăçланă чухне çак Саккунпа çирĕплетнĕ тупăшсен пĕтĕмĕшле калăпăшĕнчен ирттерсе илнĕ чăн тупăшсен иртсе пыракан финанс çулталăкĕн пуçламăшĕ тĕлне усă курмасăр юлнă укçа-тенкĕ юлашкийĕсене Фонд çак Саккуна улшăнусем кĕртмесĕрех, Фонд бюджечĕн пĕтĕмлетнĕ бюджет çырăвне улшăнусем кĕртсе, тĕллевлĕн куçарса панă субсидисен, субвенцисен, бюджетсем хушшинчи ытти трансфертсен палăртнă тĕллевĕсемпе килĕшӳллĕн яма пултарать.

2. Çапла палăртас: Раççей Федерацийĕн Бюджет кодексĕпе килĕшӳллĕн Раççей Федерацийĕн бюджет классификацине улшăнусем кĕртни Фонд бюджечĕн пĕтĕмлетнĕ бюджет çырăвне улшăнусем кĕртмелли никĕс пулса тăрать.

3. Çапла палăртас: Раççей Федерацийĕн «Раççей Федерацийĕнчи пурне те тивĕçлĕ медицина страхованийĕ çинчен» 2010 çулхи чӳк уйăхĕн 29-мĕшĕнчи 326-ФЗ №-лĕ саккунĕн 28 статйин 4-мĕш пайĕн 5-мĕш пункчĕпе килĕшӳллĕн 2013 çулта кашни страхлав медицина организацийĕ валли шутласа çирĕплетнĕ укçа-тенкĕ калăпăшне, ăна асăннă страхлав медицина организацийĕнчи страхланă çынсен йышне тата çын пуçне уйăрммăн палăртнă норматива тĕпе хурса шутласа палăртасçĕ, перекетленине пула пуçтарăннă укçа-тенкĕн 10 процентне 2014 çулта страхлав медицина организацийĕсен укçи-тенкине ӳстерме ярасçĕ.

4. Çапла палăртас: Фонд бюджечĕн 2014 çулхи кăрлач уйăхĕн 1-мĕшĕ тĕлне юлнă укçа-тенкĕ юлашкийĕсене кăçалхи финанс çулĕнчи Фонд бюджечĕн пĕтĕмĕшле калăпăшĕн пĕрре вун иккĕмĕш пайĕнчен ытларах мар виçепе 2014 çулта Фонд бюджетне пурнăçланă чухне пулакан касса уйрăм¬лăхĕсене хуплама яма пултарасçĕ.

6 статья. **Фондăн нормăланă страхлав саппасĕ**

1. Фондăн нормăланă страхлав саппасне 2014 çулта тата планпа пăхнă 2015 тата 2016 çулсенчи тапхăрта кашни çул 650000,0 пин тенкĕ чухлĕ çирĕплетес.

Фондăн нормăланă страхлав саппасĕн Фонд бюджетĕнче 2014 çулхи кăрлач уйăхĕн 1-мĕшĕ тĕлне юлнă укçа-тенкĕ юлашкийĕсене 2014 çулта Фондăн нормăланă страхлав саппасне тултарма ямалла.

2. Нормăланă страхлав саппасĕн укçи-тенкипе çакăн валли усă курасçĕ:

1) страхлав медицина организацийĕсене хушма укçа-тенкĕ уйăрса пурне те тивĕçлĕ медицина страхованийĕн территори программисене пурнăçлассине укçа-тенкĕпе тивĕçтерме;

2) страхланă çынсене пурне те тивĕçлĕ медицина страхованийĕн полисне панă Раççей Федерацийĕн субъекчĕн территорийĕн тулашĕнче кӳнĕ медицина пулăшăвĕшĕн тӳлесе татăлма.

7 статья. **Пурне те тивĕçлĕ медицина страхованийĕн ĕçне тытса пыма тухакан тăкаксен виçи**

Страхлав медицина организацийĕсем валли пурне те тивĕçлĕ медицина страхованийĕн ĕçне тытса пыма тухакан тăкаксен виçине страхлав медицина организацине пĕр çын пуçне уйрăммăн палăртнă норматив тăрăх куçарса панă укçа-тенкĕ суммин 1,0 процентĕ чухлĕ виçепе çирĕплетес.

8 статья. **Çак Саккун вăя кĕресси**

Çак Саккун 2014 çулхи кăрлач уйăхĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа вăя кĕрет.

**Чăваш Республикин Пуçлăхĕ М. ИГНАТЬЕВ.**

Шупашкар, 2013, чӳк, 28, 86 №.

*Чăваш Республикин «Чăваш Республикин Пурне те тивĕçлĕ медицина страхованийĕн территори фончĕн 2014 çулхи тата планпа пăхнă 2015 тата 2016 çулсенчи тапхăрти бюджечĕ çинчен» саккунĕ çумне 1-мĕш хушса çырни*

**Чăваш Республикин Пурне те тивĕçлĕ медицина страхованийĕн территори фончĕн бюджечĕн тупăшĕсен тĕп администраторĕсен ПЕРЕЧЕНĔ**

| Раççей Федерацийĕн бюджет классификацийĕн кочĕ: тупăшсен тĕп администраторĕн | Раççей Федерацийĕн бюджет классификацийĕн кочĕ: Чăваш Республикин Пурне те тивĕçлĕ медицина страхованийĕн территори фончĕн бюджечĕн тупăшĕсен | Чăваш Республикин Пурне те тивĕçлĕ медицина страхованийĕн территори фончĕн бюджечĕн тупăшĕсен тĕп администраторĕн ячĕ |
|---|---|---|
| 1 | 2 | 3 |
| 395 | | Пурне те тивĕçлĕ медицина страхованийĕн территори фончĕсем |
| 395 | 1 11 02072 09 0000 120 | Пурне те тивĕçлĕ медицина страхованийĕн территори фончĕсен вăхăтлăх ирĕклĕ укçи-тенкине вырнаçтарнинчен илекен тупăшсем |
| 395 | 1 11 09049 09 0000 120 | Пурне те тивĕçлĕ медицина страхованийĕн территори фончĕсен оперативлă управленийĕнчи пурлăхпа усă курнинчен кĕрекен ытти укçа-тенкĕ |
| 395 | 1 13 01999 09 0000 130 | Пурне те тивĕçлĕ медицина страхованийĕн территори фончĕсен бюджечĕсен тӳлевлĕ пулăшу ĕçĕсем панинчен (ĕçсем пурнăçланинчен) илекен ытти тупăшĕсем |
| 395 | 1 13 02069 09 0000 130 | Пурне те тивĕçлĕ медицина страхованийĕн территори фончĕсен оперативлă управленийĕнчи патшалăх пурлăхĕпе усă курнипе пулнă тăкаксене саплаштармалли йĕркепе илекен тупăшсем |
| 395 | 1 13 02999 09 0000 130 | Пурне те тивĕçлĕ медицина страхованийĕн территори фончĕсен бюджечĕсен тăкакĕсене саплаштарнинчен илекен ытти тупăшсем |
| 395 | 1 14 02090 09 0000 410 | Пурне те тивĕçлĕ медицина страхованийĕн территори фончĕсен оперативлă управленийĕнчи пурлăха сутнинчен (асăннă пурлăх енĕпе тĕп хатĕрсене сутнă пайра) илекен тупăшсем |
| 395 | 1 14 02090 09 0000 440 | Пурне те тивĕçлĕ медицина страхованийĕн территори фончĕсен оперативлă управленийĕнчи пурлăха сутнинчен (асăннă пурлăх енĕпе хатĕрлесе хунă пурлăха сутнă пайра) илекен тупăшсем |
| 395 | 1 16 20040 09 0000 140 | Раççей Федерацийĕн патшалăхăн бюджет тулашĕнчи фончĕсем çинчен тата пурне те тивĕçлĕ социаллă страхованин пайăр тĕсĕсем çинчен калакан саккунĕсене, бюджет саккунĕсене пăснăшăн шыраса илекен укçа-тенкĕ (штрафсем) (пурне те тивĕçлĕ медицина страхованийĕн территори фончĕсен бюджечĕсен пайĕнче) |
| 395 | 1 16 21090 09 0000 140 | Шыраса илекен укçа-тенкĕ (штрафсем) тата преступлени тăвакансенчен сиен кӳнине саплаштарнăшăн илекен ытти укçа-тенкĕ, вĕсене пурне те тивĕçлĕ медицина страхованийĕн территори фончĕсен бюджечĕсене куçарса парасçĕ |
| 395 | 1 16 23091 09 0000 140 | Граждан яваплăхĕн обязательнăй страхлавĕ енĕпе страхлав пулăмĕ çитнĕ чухне пурне те тивĕçлĕ медицина страхованийĕн территори фончĕсен бюджечĕсен укçи-тенкине илсе тăракансем тупăш илекенсем шутланнă чухне сиене саплаштарнинчен илекен тупăшсем |
| 395 | 1 16 23092 09 0000 140 | Ытти страхлав пулăмĕ çитнĕ чухне пурне те тивĕçлĕ медицина страхованийĕн территори фончĕсен бюджечĕсен укçи-тенкине илсе тăракансем тупăш илекенсем шутланнă чухне сиене саплаштарнинчен илекен тупăшсем |
| 395 | 1 16 32000 09 0000 140 | Бюджет укçи-тенкине саккуна пăсса е тĕллевсĕр тăкакласа кӳнĕ сиене саплаштарма шыраса илекен укçа-тенкĕ (пурне те тивĕçлĕ медицина страхованийĕн территори фончĕсен бюджечĕсен пайĕнче) |
| 395 | 1 16 33090 09 0000 140 | Пурне те тивĕçлĕ медицина страхованийĕн территори фончĕсен нушисемшĕн таварсем тăратмалли, ĕçсем пурнăçламалли тата пулăшу ĕçĕсем памалли заказсем вырнаçтарасси çинчен калакан Раççей Федерацийĕн саккунĕсене пăснăшăн шыраса илекен укçа-тенкĕ (штрафсем) |
| 395 | 1 16 90090 09 0000 140 | Шыраса илекен укçа-тенкĕрен (штрафсенчен) тата ытти укçа-тенкĕрен сиен кӳнине саплаштарма пурне те тивĕçлĕ медицина страхованийĕн территори фончĕсене куçарса паракан ытти укçа-тенкĕ |
| 395 | 1 17 01090 09 0000 180 | Пурне те тивĕçлĕ медицина страхованийĕн территори фончĕсен бюджечĕсене куçарса панă паллă мар укçа-тенкĕ |
| 395 | 1 17 06040 09 0000 180 | Пурне те тивĕçлĕ медицина страхованийĕн территори фончĕсене налукран куçарман ытти укçа-тенкĕ |
| 395 | 1 18 09000 09 0000 180 | Раççей Федерацийĕн бюджет тытăмĕнчи бюджетсем хушшинчи расчетсене йĕркене кĕртнине пула пурне те тивĕçлĕ медицина страхованийĕн территори фончĕсен бюджечĕсене пырса кĕрекен (пурне те тивĕçлĕ медицина страхованийĕн территори фончĕсен бюджечĕсенчен куçарса паракан) укçа-тенкĕ |
| 395 | 2 02 05202 09 0000 151 | Раççей Федерацийĕн субъекчĕсен бюджечĕсенчен пурне те тивĕçлĕ медицина страхованийĕн территори фончĕсене пурне те тивĕçлĕ медицина страхованийĕн никĕсри программи пайĕнче пурне те тивĕçлĕ медицина страхованийĕн территори программине пурнăçлассине хушма укçа-тенкĕпе тивĕçтерме уйăрса паракан бюджетсем хушшинчи трансфертсем |
| 395 | 2 02 05806 09 0000 151 | Пурне те тивĕçлĕ медицина страхованийĕн федераци фончĕн нормăланă страхлав саппасĕнчен пурне те тивĕçлĕ медицина страхованийĕн территори фончĕсене медицина страхлав организацийĕсене тата медицина организацийĕсене пурне те тивĕçлĕ медицина страхованийĕн территори фончĕсем палăртнă чи лайăх ĕç кăтартăвĕсемшĕн хавхалантарма уйăракан укçа-тенкĕ |
| 395 | 2 02 05812 09 0000 151 | Пурне те тивĕçлĕ медицина страхованийĕн территори фончĕсен бюджечĕсене Раççей Федерацийĕн субъекчĕсен патшалăх влаçĕн органĕсене пурне те тивĕçлĕ медицина страхованийĕн сферинче Раççей Федерацийĕн шанса панă полномочийĕсене пурнăçлама уйăрса паракан субвенцисем |
| 395 | 2 02 05813 09 0000 151 | Пурне те тивĕçлĕ медицина страхованийĕн территори фончĕсен бюджечĕсене медицина ĕçченĕсене пĕр хутчен паракан саплаштару укçине тӳлеме уйăрса паракан бюджетсем хушшинчи трансфертсем |
| 395 | 2 18 06040 09 0000 151 | Пурне те тивĕçлĕ медицина страхованийĕн территори фончĕсен бюджечĕсем иртнĕ çулсенче тĕллевлĕ панă субсидисен, субвенцисен тата бюджетсем хушшинчи ытти трансфертсен юлнă пайне тавăрса панинчен илекен тупăшсем |
| 395 | 2 19 06024 09 0000 151 | Пурне те тивĕçлĕ медицина страхованийĕн территори фончĕсен бюджечĕсенчен иртнĕ çулсенче тĕллевлĕ панă субсидисен, субвенцисен тата бюджетсем хушшинчи ытти трансфертсен юлнă пайне тавăрса пани |
| 395 | 2 19 06080 09 0000 151 | Пурне те тивĕçлĕ медицина страхованийĕн территори фончĕсен бюджечĕсенчен иртнĕ çулсенче тĕллевлĕ панă субсидисен, субвенцисен тата бюджетсем хушшинчи ытти трансфертсен юлнă пайне Пурне те тивĕçлĕ медицина страхованийĕн федераци фончĕн бюджетне тавăрса пани |

*Чăваш Республикин «Чăваш Республикин Пурне те тивĕçлĕ медицина страхованийĕн территори фончĕн 2014 çулхи тата планпа пăхнă 2015 тата 2016 çулсенчи тапхăрти бюджечĕ çинчен» саккунĕ çумне 2-мĕш хушса çырни*

**Чăваш Республикин Пурне те тивĕçлĕ медицина страхованийĕн территори фончĕн бюджечĕн дефицитне укçа-тенкĕпе тивĕçтермелли çăл куçсен тĕп администраторĕсен ПЕРЕЧЕНĔ**

| Сыпăк кочĕ | Ушкăн, çум ушкăн, статья тата çăл куçсен тĕсĕн кочĕ | Ячĕ |
|---|---|---|
| 395 | | Пурне те тивĕçлĕ медицина страхованийĕн территори фончĕсем |
| 395 | 01 05 02 01 09 0000 510 | Пурне те тивĕçлĕ медицина страхованийĕн территори фончĕсен бюджечĕсен ытти юлнă укçи-тенки ӳсни |
| 395 | 01 05 02 01 09 0000 610 | Пурне те тивĕçлĕ медицина страхованийĕн территори фончĕсен бюджечĕсен ытти юлнă укçи-тенки чакни |
| 395 | 01 06 06 01 09 0000 510 | Пурне те тивĕçлĕ медицина страхованийĕн территори фончĕсен харпăрлăхĕнчи ытти финанс активĕсем пурне те тивĕçлĕ медицина страхованийĕн территори фончĕсен бюджечĕсен Раççей Федерацийĕн укçипе кредит организацийĕсенче депозита вырнаçтарнă укçи-тенки шучĕпе ӳсни |
| 395 | 01 06 06 01 09 0000 610 | Пурне те тивĕçлĕ медицина страхованийĕн территори фончĕсен харпăрлăхĕнчи ытти финанс активĕсем пурне те тивĕçлĕ медицина страхованийĕн территори фончĕсен бюджечĕсен Раççей Федерацийĕн укçипе кредит организацийĕсенче депозита вырнаçтарнă укçи-тенки шучĕпе чакни |

*Чăваш Республикин «Чăваш Республикин Пурне те тивĕçлĕ медицина страхованийĕн территори фончĕн 2014 çулхи тата планпа пăхнă 2015 тата 2016 çулсенчи тапхăрти бюджечĕçинчен» саккунĕ çумне 3-мĕш хушса çырни*

**Чăваш Республикин Пурне те тивĕçлĕ медицина страхованийĕн территори фончĕн бюджечĕн бюджет укçи-тенкине 2014 çул валли бюджетсен тăкакĕсен классификацийĕн пайĕсем, çум пайĕсем,тĕллевлĕ статйисем тата тăкаксен тĕсĕсен ушкăнĕсем тăрăх ПАЙЛАСА ПАНИ**

(пин тенкĕ)

| Ячĕ | Бюджет укçи-тенкин тĕп йĕркелӳçи | Пай | Çум пай | Тăкаксен тĕллевлĕ статйи | Тăкаксен тĕсĕ ушкăнĕ | Укçа-тенкĕ калăпăшĕ |
|---|---|---|---|---|---|---|
| 1 | 2 | 3 | 4 | 5 | 6 | 7 |
| Пурне те тивĕçлĕ медицина страхованийĕн территори фончĕсем | 395 | | | | | 10124654,3 |
| Пĕтĕм патшалăх ыйтăвĕсем | 395 | 01 | 00 | | | 51943,7 |
| Пĕтĕм патшалăхăн ытти ыйтăвĕсем | 395 | 01 | 13 | | | 51943,7 |
| Чăваш Республикин Пурне те тивĕçлĕ медицина страхованийĕн территори фончĕн программăна кĕмен ĕç-хĕл çул-йĕрĕсем | 395 | 01 | 13 | 73 0 0000 | | 51943,7 |
| Чăваш Республикин Пурне те тивĕçлĕ медицина страхованийĕн территори фончĕн аппарачĕ ĕç-хĕл пурнăçласси | 395 | 01 | 13 | 73 2 0000 | | 51943,7 |
| Патшалăх учрежденийĕсен ĕç-хĕлне (пулăшу ĕçĕсем парассине) тивĕçтерме каякан тăкаксем | 395 | 01 | 13 | 73 2 0059 | | 51943,7 |
| Патшалăх (муниципалитет) органĕсем, хысна учрежденийĕсем, патшалăхăн бюджет тулашĕнчи фончĕсен управлени органĕсен ĕç-хĕлне тивĕçтерес тĕллевпе персонала тӳлеме каякан тăкаксем | 395 | 01 | 13 | 73 2 0059 | 100 | 34211,8 |
| Патшалăх (муниципалитет) нушисем валли таварсем, ĕçсемпе пулăшу ĕçĕсем туянасси | 395 | 01 | 13 | 73 2 0059 | 200 | 17571,9 |
| Бюджетран уйăракан ытти укçа-тенкĕ | 395 | 01 | 13 | 73 2 0059 | 800 | 160,0 |
| Сывлăха сыхлас ĕç | 395 | 09 | 00 | | | 10072710,6 |
| Сывлăха сыхлас ĕç енĕпе ытти ыйтусем | 395 | 09 | 09 | | | 10072710,6 |
| Чăваш Республикин Пурне те тивĕçлĕ медицина страхованийĕн территори фончĕн программа тулашĕнчи ĕçĕ-хĕлĕ | 395 | 09 | 09 | 73 0 0000 | | 10072710,6 |
| Социаллă политика енĕпе патшалăх ĕç-хĕлне пурнăçласси | 395 | 09 | 09 | 73 1 0000 | | 10072710,6 |
| Раççей Федерацийĕн патшалăхăн бюджет тулашĕнчи фончĕсен управлени органĕсем социаллă политика енĕпе патшалăх ĕç-хĕлне программăна кĕмен ĕç-хĕл çул-йĕрĕсем енĕпе пурнăçланă шайра Раççей Федерацийĕн субъекчĕсен территорийĕнче пурне те тивĕçлĕ медицина страхованийĕ тăвассине укçа-тенкĕпе тивĕçтерме | 395 | 09 | 09 | 73 1 5093 | | 10072710,6 |
| Социаллă пулăшу парасси тата халăха тӳлекен ытти тӳлевсем | 395 | 09 | 09 | 73 1 5093 | 300 | 10072710,6 |

*Чăваш Республикин «Чăваш Республикин Пурне те тивĕçлĕ медицина страхованийĕн территори фончĕн 2014 çулхи тата планпа пăхнă 2015 тата 2016 çулсенчи тапхăрти бюджечĕ çинчен» саккунĕ çумне 4-мĕш хушса çырни*

**Чăваш Республикин Пурне те тивĕçлĕ медицина страхованийĕн территори фончĕн бюджечĕн бюджет укçи-тенкине 2015 тата 2016 çулсем валли бюджетсен тăкакĕсен классификацийĕн пайĕсем, çум пайĕсем, тĕллевлĕ статйисем тата тăкаксен тĕсĕсен ушкăнĕсем тăрăх ПАЙЛАСА ПАНИ**

(пин тенкĕ)

| Ячĕ | Бюджет укçи-тенкин тĕп йĕркелӳçи | Пай | Çум пай | Тăкаксен тĕллевлĕ статйи | Тăкаксен тĕсĕн ушкăнĕ | Укçа-тенкĕ калăпăшĕ | |
|---|---|---|---|---|---|---|---|
| | | | | | | 2015 çул | 2016 çул |
| 1 | 2 | 3 | 4 | 5 | 6 | 7 | 8 |
| Пурне те тивĕçлĕ медицина страхованийĕн территори фончĕсем | 395 | | | | | 10695439,7 | 11348075,3 |
| Пĕтĕм патшалăх ыйтăвĕсем | 395 | 01 | 00 | | | 51943,7 | 51943,7 |
| Пĕтĕм патшалăхăн ытти ыйтăвĕсем | 395 | 01 | 13 | | | 51943,7 | 51943,7 |
| Чăваш Республикин Пурне те тивĕçлĕ медицина страхованийĕн территори фончĕн программăна кĕмен ĕç-хĕл çул-йĕрĕсем | 395 | 01 | 13 | 73 0 0000 | | 51943,7 | 51943,7 |
| Чăваш Республикин Пурне те тивĕçлĕ медицина страхованийĕн территори фончĕн аппарачĕ ĕç-хĕл пурнăçласси | 395 | 01 | 13 | 73 2 0000 | | 51943,7 | 51943,7 |
| Патшалăх учрежденийĕсен ĕç-хĕлне (пулăшу ĕçĕсем парассине) тивĕçтерме каякан тăкаксем | 395 | 01 | 13 | 73 2 0059 | | 51943,7 | 51943,7 |
| Патшалăх (муниципалитет) органĕсем, хысна учрежденийĕсем, патшалăхăн бюджет тулашĕнчи фончĕсен управлени органĕсен ĕç-хĕлне тивĕçтерес тĕллевпе персонала тӳлеме каякан тăкаксем | 395 | 01 | 13 | 73 2 0059 | 100 | 34211,8 | 34211,8 |
| Патшалăх (муниципалитет) нушисем валли таварсем, ĕçсемпе пулăшу ĕçĕсем туянасси | 395 | 01 | 13 | 73 2 0059 | 200 | 17571,9 | 17571,9 |
| Бюджетран уйăрса паракан ытти укçа-тенкĕ | 395 | 01 | 13 | 73 2 0059 | 800 | 160,0 | 160,0 |
| Сывлăха сыхлас ĕç | 395 | 09 | 00 | | | 10643496,0 | 11296131,6 |
| Сывлăха сыхлас ĕç енĕпе ытти ыйтусем | 395 | 09 | 09 | | | 10643496,0 | 11296131,6 |
| Чăваш Республикин Пурне те тивĕçлĕ медицина страхованийĕн территори фончĕн программăна кĕмен ĕç-хĕл çул-йĕрĕсем | 395 | 09 | 09 | 73 0 0000 | | 10643496,0 | 11296131,6 |
| Социаллă политика енĕпе патшалăх ĕç-хĕлне пурнăçласси | 395 | 09 | 09 | 73 1 0000 | | 10643496,0 | 11296131,6 |
| Раççей Федерацийĕн патшалăхăн бюджет тулашĕнчи фончĕсен управлени органĕсем социаллă политика енĕпе патшалăх ĕç-хĕлне программăна кĕмен ĕç-хĕл çул-йĕрĕсем енĕпе пурнăçланă шайра Раççей Федерацийĕн субъекчĕсен территорийĕнче пурне те тивĕçлĕ медицина страхованийĕ тăвассине укçа-тенкĕпе тивĕçтерме | 395 | 09 | 09 | 73 1 5093 | | 10643496,0 | 11296131,6 |
| Социаллă пулăшу парасси тата халăха тӳлекен ытти тӳлевсем | 395 | 09 | 09 | 73 1 5093 | 300 | 10643496,0 | 11296131,6 |

*Чăваш Республикин «Чăваш Республикин Пурне те тивĕçлĕ медицина страхованийĕн территори фончĕн 2014 çулхи тата планпа пăхнă 2015 тата2016 çулсенчи тапхăрти бюджечĕ çинчен» саккунĕ çумне 5-мĕш хушса çырни*

**Пурне те тивĕçлĕ медицина страхованийĕн федераци фончĕн бюджетĕнчен, Чăваш Республикин республика бюджетĕнчен уйăрса паракан бюджетсем хушшинчи трансфертсене 2014 çул валли ПАЙЛАСА ПАНИ**

(пин тенкĕ)

| Бюджетсем хушшинчи трансфертсен ячĕ | Укçа-тенкĕ калăпăшĕ |
|---|---|
| Пурне те тивĕçлĕ медицина страхованийĕн федераци фончĕн бюджетĕнчен илекен бюджетсем хушшинчи трансфертсем – пĕтĕмпе | 8640379,0 |
| çав шутра çак ĕçсем валли: | |
| Раççей Федерацийĕн субъекчĕсен патшалăх влаçĕн органĕсене пурне те тивĕçлĕ медицина страхованийĕн сферинче Раççей Федерацийĕн шанса панă полномочийĕсене пурнăçлама | 8640379,0 |
| Чăваш Республикин республика бюджетĕнчен илекен бюджетсем хушшинчи трансфертсем – пĕтĕмпе | 1314275,3 |
| çав шутра çак ĕçсем валли: | |
| пурне те тивĕçлĕ медицина страхованийĕн никĕсри программи пайĕнче пурне те тивĕçлĕ медицина страхованийĕн территори программине пурнăçлассине хушма укçа-тенкĕпе тивĕçтерме | 1314275,3 |
| çав шутран: | |
| васкавлă медицина пулăшăвне укçа-тенкĕпе тивĕçтерме (ятарлă васкавлă медицина (санитари-авиаци) пулăшăвĕсĕр пуçне) | 399472,1 |
| Федерацин «Раççей Федерацийĕнчи пурне те тивĕçлĕ медицина страхованийĕ çинчен» 2010 çулхи чӳк уйăхĕн 29-мĕшĕнчи 326-ФЗ №-лĕ саккунĕн 35 статйин 7-мĕш пайĕпе килĕшӳллĕн 2013 çултан пуçласа медицина пулăшăвĕшĕн тӳлемелли хак тытăмне кĕртекен тăкаксене укçа-тенкĕпе тивĕçтерме | 914803,2 |
| Пĕтĕмпе | 9954654,3 |

*Чăваш Республикин «Чăваш Республикин Пурне те тивĕçлĕ медицина страхованийĕн территори фончĕн 2014 çулхи тата планпа пăхнă 2015 тата 2016 çулсенчи тапхăрти бюджечĕ çинчен» саккунĕ çумне 6-мĕш хушса çырни*

**Пурне те тивĕçлĕ медицина страхованийĕн федераци фончĕн бюджетĕнчен уйăрса паракан бюджетсем хушшинчи трансфертсене 2015 тата 2016 çулсем валли ПАЙЛАСА ПАНИ**

(пин тенкĕ)

| Бюджетсем хушшинчи трансфертсен ячĕ | Укçа-тенкĕ калăпăшĕ | |
|---|---|---|
| | 2015 çул | 2016 çул |
| Пурне те тивĕçлĕ медицина страхованийĕн федераци фончĕн бюджетĕнчен уйăрса паракан бюджетсем хушшинчи трансфертсем – пĕтĕмпе | 10525439,7 | 11178075,3 |
| çав шутра çак ĕçсем валли: | | |
| Раççей Федерацийĕн субъекчĕсен патшалăх влаçĕн органĕсене пурне те тивĕçлĕ медицина страхованийĕн сферинче Раççей Федерацийĕн шанса панă полномочийĕсене пурнăçлама | 10525439,7 | 11178075,3 |

**«Хыпар» хаçатăн çитес номерĕ раштав уйăхĕн 7-мĕшĕнче тухать.**


чăваш халăх хаçачĕ

ХЫПАР



УчРЕДИТЕЛЬСЕМ – чăВАШ РЕСПУБЛИКИН МИНИСТРСЕН КАБИНЕЧĔ, "ХЫПАР" ХАÇАТ РЕДАКЦИЙĔ

Федерацин çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникацисен сферинчи надзор службин Чăваш Республикинчи управленийĕнче 2013 çулхи çу уйăхĕн 31-мĕшĕнче ПИ ТУ21-00281 №-пе регистрациленĕ

"Хыпар" индексĕ – 54800, "Хыпар"-шăмат кун"– 78353, "Çамрăксен хаçачĕ" – 54804, "Чăваш хĕрарăмĕ" – 11515, "Сывлăх" – 11524, "Кил-çурт, хушма хуçалăх" – 54806.

Директор-тĕп редактор А.П.ЛЕОНТЬЕВ

Номер редакторĕ Г.А.МАКСИМОВ

Дежурнăй редактор И.В.ИВАНОВА



РЕДКОЛЛЕГИ:
М.М.АРЛАНОВ /тĕп редактор çумĕ/
Т.В.ИЛЬИНА
А.П.ЛЕОНТЬЕВ / директор – тĕп редактор/
Г.А.МАКСИМОВ /тĕп редактор çумĕ/
А.Х.ЛУКИЯНОВА, Н.Г.СМИРНОВА



Адрес: 428019, ШУПАШКАР, ИВАН ЯКОВЛЕВ ПРОСПЕКЧĔ, 13, ПИЧЕТ ÇУРЧĔ, III ХУТ, "ХЫПАР".

ТЕЛЕФОНСЕМ

Редакци телефонĕсем:
56-00-67 – директор – тĕп редактор
56-33-64 – тĕп редактор çумĕ
56-04-17 – тĕп редактор çумĕ
62-08-62 – секретариат, яваплă секретарь
пайсем:
28-85-01 – общество пурнăçĕпе политика пайĕ
56-05-21 – журналист тĕпчевĕсен тата куçару пайĕ
56-08-62 – экономика пайĕ
56-22-31, 28-85-91 – социаллă пурнăçпа вĕренӳ пайĕ
56-08-61 – культурăпа чăваш диаспорин пайĕ
56-04-26, 28-85-87 – хроникăпа хамăр корреспондентсен пайĕ
28-82-91 – корректорсем
56-45-94 – фотокорреспондент
бухгалтери – 28-83-64
коммерци дирекцийĕ:
28-83-70 – рекламăпа пĕлтерӳсен пайĕ
56-20-07 – çырăнтарупа реализаци пайĕ
корр. пункчĕсем:
8-937-398-75-33 – Хĕрлĕ Чутай,
/8-835-38/ 2-18-02, 2-11-95 – Йĕпреç
28-85-71 – Чăваш Республикин Журналистсен союзĕн правленийĕ

Ĕç кунĕ 8 сехет те 45 минутран пуçласа 17 сехет те 45 минутчен, шăмат кунпа вырсарни кунсăр пуçне.

hypar2008@rambler.

Факс: /8352/ 28-83-70
Электрон почта: pop408@rambler.ru hypar@mail.ru



РЕКЛАМĂПА ПĔЛТЕРӲСЕНЕ 316-мĕш пӳлĕмре йышăнаççĕ. Тел. 28-83-70.

Офсет пичечĕ. Калăпăшĕ 2 пичет листи. Рекламăпа пĕлтерӳсен чăнлăхĕшĕн вĕсене паракансем яваплă.

Хаçатри рекламăсăр тӳлевлĕ информаци материалĕсем "Реклама çинчен" федераци саккунĕн 2 ст. килĕшӳллĕн **"Аталану çулĕпе", "Ят-сум", "Ĕç тата çын", "Самана таппи", "Компетентлă"** рубрикăсемпе пичетленеççĕ.



Хаçата «Хыпар» Издательство çуртĕ» АУ техника центрĕнче калăпланă, «Чăваш Ен» ИПК» ПУП типографийĕнче пичетленĕ. 428019, Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчĕ, 13. 56-00-23 – издательство директорĕ.

Пичете графикпа 21 сехетре алă пусмалла, 20 сехет те 45 минутра алă пуснă.

Тираж 7006. Заказ 4274.